Райцентр аталанăвĕнчен

# Йывăррăн кӳлетпĕр – хăвăртрах каятпăр











Районта халăх пурнăçне лайăхлатассипе темиçе программа ĕçлени вăрттăнлăх мар. Ку вăл ĕç çыннин пурнăçне лайăхлатассипе çыхăннă. Ял çыннине куллен кирлĕ йӳнĕ те пахалăхлă таварпа тивĕçтерессипе те çаканта айккинче тăмасть. Кунта вара паян конкуренци хуçаланать. Вăл шăпах таварăн пахалăхĕпе хакĕ çине витĕм кӳрет те ĕнтĕ. Çак çул çинче райцентрти пасар тĕп вырăнта. Предпринимательсен йышĕ ӳснипе юлашки çулсенче Муркаш пасарĕ палăрмаллах сарăлса кайрĕ. Çавăнпах кунти хăрушсăрлăх ыйтăвĕ, тирпей-илемлĕх хăш-пĕр çивĕчлĕхсем çуратрĕ. Çакна “Муркаш пасарĕ” муниципаллă унитарлă предприяти дирекцийĕ те, район администрацийĕ те куç хыçне хăвараймарĕç. Çиччĕ виççе пăхнă хыççăн пасара икĕ пая пайлама йышăнчĕç. Ĕнер, августăн 15-мĕшĕнче, пасарăн иккĕмĕш пайĕ “Моргаушавтотехсервис” территорийĕнче савăнăçлă лару-тăрура уçăлчĕ.

– Паян иртенпех Муркашра юрă янăрать, хĕвел хĕртсе пăхать. Çакнашкал самантра эсир çаканта пухăнни пасар малашлăхĕ пуррине калать. Çапла пултăр! – терĕ пасарăн иккĕмĕш пайне уçса иртттернĕ савăнăçлă митингра район администраци пуçлăхĕн пĕрремĕш çумĕ А. Иванов.

– Çĕнни йывăррăн вăй илнине пĕлетпĕр. Унччченхи вырăнта пасар, уйрăмах эрне кунсенче, тăварланса çитнипе тĕп урамалла тухма пуçланине те кашниех курнă. Çакă паллах никама та чыс кӳмест. Çĕнĕ вырăнта ĕç тухăçлăрах каясса шанатпăр. Мĕнех, сутуçăсен бизнесĕ ăнăçтăр, тавар туянакан вара кăмăллă юлтăр! – терĕ “Муркаш пасарĕ” МУП директорĕ Е. Субботин.

“Муркаш пасарĕн” иккĕмĕш пайне уçма пынисем райцентрти Культура çурчĕ çумĕнчи “Расна” ушкăн концерчĕпе тата Чăваш эстрада çăлтăрĕн Г.Ваккун пултарулăхĕпе паллашрĕç. Мĕнех, çитсе курăр çĕнĕ пасара. Вĕренӳ çулĕ пуçланиччен кунта “Шкул пасарĕ” те ĕçлĕ. Хальлĕхе кунта предпринимательсен пысăк йышех çук-ха, анчах халăхра калашле эпир йывăррăн кӳлетпĕр те хăвăртрах каятпăр. Çапла пултăрччĕ ку хутĕнче те. Суту-илӳ тума вара çĕнĕ çĕрте условисем меллĕ. Пырса курăр! Ӳкĕнмĕр!

**Анатолий БЕЛОВ.**

**Сăн ӳкерчĕксенче: çĕнĕ пасарăн пĕрремĕш кунĕ.**

**Автор сăн ӳкерчĕкĕсем.**

Йĕрке хуралçисенчен илнĕ интервью

# Наркотик - обществăшăн хăрушлăх палли

**Çурла уйăхĕн 8–9-мĕшĕсенче Шупашкарта ЧР Наркотиксен тата психотроплă хутăшсен çаврăнăшне тĕрĕслесе тăракан управленийĕпе РФ федерацин наркоконтроль службин ведомствисем хушшинчи профилактика тата обществăпа çыхăну тытас енĕпе ĕçлекен территори подразделенийĕсен ертӳçисен тата федерацин Атăлçи округĕнчи субъекчĕсен тĕп наркологиĕсен пĕрлехи канашлăвĕ ĕçлерĕ. Вăл “Федерацин Атăлçи округĕнчи наркоконтроль службин территорири органĕсен тата округри наркологи службин хушшинчи хутшăнусене çирĕплетсе аталантарассипе çыхăннă ыйтусем” ятпа иртрĕ. Çакă хамăр хушăмăрти йĕркелĕхпе тирпейлĕх шалти ĕçсен пайĕнче службăра тăракансен тăрăшулăхĕпе çеç пурнăçа кĕрсе пыраймани пирки те калать. Кунта обществăн хăйĕн мал туртăмлă аталану тĕллевĕ кирлĕ. Çакна пурте ăнланатпăр пулин те, юлашки çулсенче пирĕн хушăмăрта унччен пулман киревсĕр енсем çул уçма пуçланине те пытарма çук. Акă, унччен эпир наркотик сăмаха илтнĕ çеç пулсан, паян унпа усă куракансем хамăр хушăрах пур тенине илтетпĕр. Чăнлăхпа тӳреммĕн çыхăннă-и-ха вăл сăмахсем? Çак ыйту çине хурав шыраса эпĕ районти шалти ĕçсен пайне çитрĕм. Манпа калаçакансем: районти шалти ĕçсен пайĕ çумĕнчи следстви уйрăмĕн пуçлăхĕ Константин Иванович Петров тата районти шалти ĕçсен пайĕн уголовнăй шырав ертӳçи Олег Николаевич Потряков.**

– Пĕрремĕш ыйту тӳреммĕнрех пулсан та, калаçăва унранах пуçлам: “Пур-и пирĕн тăрăхра наркотиксемпе усă куракансем тата ăна тăвакансем, сутакансем? Пур пулсан вĕсемпе кĕрешесси мĕнлерех пырать?”

**О. ПОТРЯКОВ**: Сирĕн ыйтăвăр çине хирĕçлесе калани хамăр ĕçлеменнине кăтартни пулĕччĕ. Эпĕ вара урăхларах калам: “Пур тата ку енпе ĕçлетпĕр”. Наркотик тумалли ӳсен-тăран ӳстерни, ăна хатĕрлени тата сутни йывăр преступлени шутланать. Пирĕн тăрăхра наркотик хатĕрлемелли тĕп ӳсен-тăрансем мак тата кантăр. Çавăнпа та хамăр тăрăхра вĕсене акса ӳстерекенсене тĕрĕслесех тăма тăрăшатпăр. Кунта пире обществăри йĕркелĕхе сыхлама ял старостисемпе вырăнсенчи активистсем нумай пулăшаççĕ. Вĕсемпе йĕрке хуралçисем пĕр вăй пулса тимленипех çак культурăсен “продукчĕсене” пуçтаракан темиçе “ĕçчене” кăçал саккун умне ответ тытма тăратрăмăр та. Кунта кĕскен çапла калас килет: мак пуçтаратăн – саккун умне тăратăн, мак ӳстеретĕн – тивĕçлĕ ответ тытатăн.

**К. ПЕТРОВ:** Олег Николаевич каланипе пĕтĕмпех килĕшетĕп. Унăн сăмахĕсем çумне хутшăнса район çыннисене хамăр ĕçĕмĕрти пĕр тĕслĕхпе паллаштарас килет. Пĕлтĕрхи сентябрĕн 15-мĕшĕнче 14 сехет тĕлĕнче Сыпайкасси тĕлĕнче Ярапайкассинчен Шупашкара каякан ВАЗ-21093 çăмăл автомашинăна документсем тĕрĕслес тĕлĕшпе милици ĕçченĕсем чарсан, К. Казынкин водитель йĕрке хуралçисем çитиччен айăплавран хăтăлас тĕллевпе автомашина салонĕнчен “саккунсăр çул çӳреве тухнă мак улăмĕ тата опийпе шӳнĕ марлĕ тампон упраннă” полимер пакета кăларса ывăтнă тĕслĕхе тĕл пултăмăр. Хыççăнхи экспертиза тĕрĕслевĕнче çав пакетри 515,9 грамм мак улăмĕ тата марлĕ тампонри 0,37 грамм опий Раççей Федерацийĕн Правительствин постановленийĕсемпе килĕшӳллĕн çумра пысăк виçеллĕ наркотик хатĕрĕсем пулни палăрчĕ. Ун тĕлĕшпе уголовнăй ĕç пуçарса ăна суда çитерсен, айăпланакан К.Казынкин хăйĕн айăпне пĕтĕмпех йышăнчĕ. Çакна та каласа хăвармалла, К. Казынкин преступлени тунă тĕле “Республикăри наркологи диспансерĕнче” сăнавра тата шыравра пулнă. Çакна шута илсе суд айăпланакана ирĕкрен хăтармасăр сыватма çуккине шута илчĕ, 4 çуллăха ирĕкрен хăтарма приговор кăларчĕ.

**О. ПОТРЯКОВ:** Çакă пĕртен пĕр ĕç пулманнине те каласа хăвармалла. Константин Иванович каласа панă ĕçе саккунпа килĕшӳллĕн вĕçленĕ-вĕçлемен “Мак-2006” операци вăхăтĕнчи оперативлă шырав мероприятийĕсенче Мăн Сĕнтĕрти 30 çулхи арçынна маларахри тĕслĕхри пекех Вомпăкассинчи пахчасенче мак улăмĕ пуçтарнăшăн тытса чартăмăр. Ку тĕслĕхре те Уголовнăй Кодексăн 228 статйин 1-мĕш пайĕпе июнь вĕçĕнче уголовнăй ĕç пуçартăмăр.

Май килнĕ чух наркотиксемпе кĕрешессин пĕлтĕрхи ӳкерчĕкне сăнламасăр та иртес килмест. 2005 çулта районта акса ӳстерме чарнă, наркотиклă япаласем пур ӳсен-тăрансене акса ӳстернĕшĕн Муркаш Енри икĕ çынна саккун умне тăратма тиврĕ. Халĕ каланинчен çакă уçăмлă курăнать: килти хушма хуçалăхра макпа кантăра пачах акса ӳстерме юрамасть, мак улăмĕ пуçтаракансене курсан-асăрхасан милицине пĕлтерекенсен ячĕ вăрттăнлăхра юлĕ.

**Анатолий БЕЛОВ калаçнă.**

Вулавçă пултарулăхĕ

## Уйсенче

Куç шăрçине сыхланă пек пăхса ӳстернĕ тырра вырса кĕртнĕ çĕрте иртен пуçласа сĕм çĕрлеччен вăй хуракан механизатор-водительсемпе уй-хир бригадисен ĕçченĕсене пархатарлă ĕçĕсемшĕн тав туса.

Пучаххисем шăркара
Çиле майлă пуç таяç.
Тулли тыр-пул пусăра –
Чунра тăрать савăнăç.

Хирте, ав, çăкăр шăрши –
Кăмакара пиçнĕ пек.
Аллăмра çăкăр чĕлли –
Тăвар сапма меллĕ пек.

Ĕлĕк вырса аннепе:
Çурлапалла, алăпа.
Киле кайман çĕрĕпе –
Ыйха туртса кĕлтепе.

Пучахне те пуçтарса,
Вырнă чухне ӳкнине.
Çĕмелне купаласа –
Пĕлсе мелне, виçине.

Йĕтем çине турттарса
Лашапала кĕлтине.
Мăнă капан хăпартса
Упрама çĕн çăкрине.

Тăпачпа авăн çапса,
Çил арманпе авăртса.
Патшалăха сутиччен
Килтех çăкăр пĕçерсе.

Ĕлĕкхи мар халь пурнăç:
Техникăпа ĕçлетпĕр.
Комбайнпа выратпăр,
Машинăпа кĕртетпĕр.

Уяр пултăр çанталăк
Тырă-пулă пуçтарма,
Таса юлтăр каçалăк
Ака-суха иртерме.

Комбайнерсен-шоферсен
Пулччăр пысăк ĕмĕтсем,
Вăйлă тыр-пул пуçтарсан
Пурнăç шайĕ ӳснĕçем.

Ыр сунатăп пурне те,
Камсем ĕçлеç уй-хирте.
Çирĕп сывлăх пултăрччĕ,
Ĕçре ăнса пытăрччĕ!

Сĕтел ури тайличчен
Çимĕç пултăр умăрта!
Сывлăхпала çăкăртан
Асли çуккă, тупа та!

**В. ПАВЛОВ.**

Турай ялĕ.

Пĕлме интереслĕ

Этемлĕх историйĕнче çĕр тĕпĕнчен мĕн чухлĕ ылтăн кăларнă? Пурĕ 193 пин тонна. Унран куб тăвас пулсан калăпăшĕпе вăл çичĕ хутлă пӳрт пек пулĕ.

## Пăшал йăтса – сунара

Сунарçăсемшĕн кĕтнĕ самант çитрĕ. Августăн 19-мĕшĕнче кĕркуннехи сунар пуçланать. Сунара каяс кăмăллисене путевкăсене эрне кун, августăн 18-мĕшĕнче, Лантăшра «Моргаушагропромхими» предприятире параççĕ.

Спорт

## Çĕнтерӳçĕ – «Никита»

**Августăн 12-мĕшĕнче** Муркаш стадионĕнче Физкультурник кунне халалласа «Никита» тата М. Шуйцев ячĕпе хисепленекен клуб командисем хушшинче футболла выляссипе суперкубок иртнĕ. Ăмăртура «Никита» команда çĕнтерӳçĕ пулса тăнă. Вăл хĕрӳ кĕрешӳре М. Шуйцев ячĕпе хисепленекен клуб командине 3-2 шутпа çĕнтерме пултарнă.

## Тав тăватпăр

Пирĕн юратнă ывăлăмăра Илья Владимирович Васильева юлашки çула ăсатма пулăшнăшăн тата çав тери йывăр хуйха пирĕнпе пĕрле пайланăшăн «Оринино» хуçалăха, тăвансене, ял-йыша чун-чĕререн тав тăватпăр.

**Васильевсен çемйи.**

Пĕлтерӳсем. Объявления

**Продается двухкомнатная квартира 40,2 кв.м. старой планировки в с. Моргауши по ул. 50 лет Октября. Цена договорная.**
**Телефоны: 8-927-851-98-71, 8-927-851-96-71.**

**Пĕрремĕш хут сентябрь уйăхĕнче пăруламалли хĕрлĕ тына сутатпăр. Кӳстерек ялĕ.**
**Тел.: 2-11-65 (ĕçри), 8-909-302-28-83.**

Турайри вăтам шкул коллективĕ кунти Э.Н. Иванова вĕрентекенĕн хуньамăшĕ

**Василиса Павловна**
**ЕФИМОВА**

вилсе кайнă пирки вĕсен çемйипе тата тăванĕсемпе пĕрле чĕререн хурланни çинчен пĕлтерет.

Çатракасси вăтам шкулĕн коллективĕ кунта нумай çул хушши ют чĕлхе вĕрентнĕ, Е.Г. Прокопьеван тата А.Г. Данилова техслужащин амăшĕ, шкул директорĕн В.А. Прокопьевăн хуньамăшĕ

**Клавдия Матвеевна**
**АКИМОВА**

вилсе кайнă пирки вĕсен çемйисемпе тата тăванĕсемпе пĕрле тарăннăн хурланни çинчен пĕлтерет.

Отделение по Моргаушскому району Управления федерального казначейства по Чувашской Республике выражает соболезнование старшему казначею Дмитриевне Галине Титовне в связи со смертью отца

**ПОРФИРЬЕВА**
**Тита Порфирьевича.**

**ГУП ЧР “Моргаушский издательский дом”**
Моргаушская районная газета
"ÇĔНТЕРӲ ЯЛАВĔ"
УЧРЕДИТЕЛИ:
Министерство культуры, по делам национальностей, информационной политики и архивного дела Чувашской Республики.
Государственное унитарное предприятие Чувашской Республики “Моргаушский издательский дом”.
**Зам. гл. редактора**
**В.Л. ШАПОШНИКОВ.**

АДРЕС: 429530, Чувашская Республика, село Моргауши, улица Мира, дом 9.
ТЕЛЕФОНЫ: директор-главный редактор - 2-11-36, заместитель главного редактора - 2-12-82, бухгалтерия - 2-11-35, отделы: общественно-политической жизни, социальной жизни - 2-12-82, сельского хозяйства - 2-11-38.
E-mail: morpress@cbx.ru
Газета зарегистрирована управлением Федеральной службы по надзору за соблюдением законодательства в сфере массовых коммуникаций и охране культурного наследия по Приволжскому федеральному округу. Свидетельство о регистрации СМИ ПИ № ФС 18-2329 от 15 августа 2005 года.

Газета выходит на чувашском языке по средам, субботам.
Печать офсетная, объем 1,0 п. листа. Тираж 3320.
Материалы на правах рекламы публикуются под знаком Р или рубрикой «Аталану çулĕпе».
Время подписания в печать в 17 час. 20 мин., подписано - в 17 час. 15.08.2006 г.
Заказ
Дежурный по номеру В.Л. ШАПОШНИКОВ.
ИНДЕКС ИЗДАНИЯ: 54822.

Номер набран и сверстан в ГУП “Моргаушский издательский дом”, отпечатан в типографии ГУП ”ИПК ”Чувашия”: 428019 г. Чебоксары, пр. И. Яковлева,13. Качество печати соответствует оттискам, предоставленным редакцией.